19-1

А-28

М. Ф. Акимов.

# ВӐХӐТСӐР ВИЛӖМ.

## (Преждевременная смерть,)

драма в 4 действиях, в 5 картинах.

**4 ПАЙЛӐ ТРАМӐ,**
**5 КАРТТИНККӐЛЛӐ.**

Издание Симбирской Чувашской Секции
Губернского Отдела Народного Образования.

Типография № 1-й Губсовнархоза.
Симбирск. — 1919 г.

## ТРАМĂРА ЁÇИЕ ТĂВАКАНÇЕМ*).

П е т ё р,—60 çула йахăн, сывлăхсăртарах.
Х ё в е к л а,—унăн арăмĕ.
Й е х х и м,—30 çула йахăн. }
М и к у л а й,—20 çулта. } вёсен ађисем.
М а р й е,—16 çулта }
У ђ у к,—Иеххим арăмĕ.
В е р у к,—Микулай тусĕ.
У р т т и м,—пйантсă (*ерех ĕçме йуратакан*).
В а ђ у к, }
Ç е р к е й } салтаксем.
Ç е с т р а.
М и к у л а й хреснашшĕ.
У н ă н арăмĕ.
Х ă н а.
У н ă н арăмĕ.
Й у м ă ç—карђăк.
Т и м а х в и.
П о л к о в н и к.
А х в и т ç е р.
Ы й т к а л а к а н.
М и к у л а й ă н йулташсем (*виççĕн*).
В ă й й а тухнă хĕрсем, ађасем.
М и к у л а й а ăсатма пынă çынсем.

---

Трамăра вăрçă вăхăтĕнђи халăхăн шухăшĕсене çырнă.

---

*) Действующие лица.

# I. ПĔРРЕМĔШ ПАЙ.

## 1. Малтанхи карттиккă.

**Стсенă.**—Вăрман, уй инçе мар. Пĕр йывăç çумĕнђе пысăк вут каски выртаť. (*Вут каски вырăнне тенкел лартма йурать*).

---

Стсенă хыçĕнђе хĕрсем сăвă калани илтĕнет.

Савни анаť шыв хĕрнэ
Сассипеле йурласа.
Сасси акăш сасси пек,
Пĕвĕ Атăл хăви пек.

(*ђаршав уçăлать*).

* * *

Пирĕн тутăр пит нумай,
Хĕрлĕ-вĕçли пĕрехçех.
Пирĕн савни пит нумай,
Ђун йуратни пĕрехçех.

(*Тимахвипе Микулай килеççĕ*).

Т и м а х в и. Ăçта хĕрсем?

М и к у л а й (*аллинђе ђэтђек*). Ав унта. Ик хуралла*) выљаççĕ.

Т и м а х в и. Ђăнах та. Ав, кунталла ђупса килеççĕ.

М и к у л а й. Апла.

Т и м а х в и. Аťа-ха. Епир те выљăпăр.

(*Марйепе Верук ђупса тухаççĕ, вĕсене Хĕлип хăвалать*).

---

*) Çул урлă каçмалла, хуралла.

Марйе. Ан тытӑар, Верук! Кунталла ҫуп.

Хӗлип. Микулай! Тыт-ха ҫавсене.

Микулай (*Верука тытат*). Ак, епӗ пӗрне тытрӑм.

Тимахви (*Марйене тытат*). Хӗлип ҫупса ҫӳрерӗ ҫӳрерӗ, пӗрне те тытаймарӗ.

Марйе. Ӑна та тыттарсав! Ҫак тӗнҫере те пурӑнас мар вара.

Хӗлип. Паҫӑр тытмарӑм-и?

Марйе. Хӑмӑр ҫупмарӑмӑр та, тытрӑн ҫав. Авантарах ҫупнӑ пулсан, пӗр кун хӑваласан та, есӗ пире хуса ҫитейместӗн.

Хӗлип. Ҫитместӗп ак!

Тимахви. (*Хӗлипе*). Пыр хӗрсем патне. Сана вӗсем кӗтеҫҫӗ. (*Хӗлип кайат*).

Марйе. (*Тимахвийе*). Айа, епир те кайар.

Тимахви. Айа, айа. (*Кайаҫҫӗ*).

Микулай. Верук, ҫакӑнта ларар-и?

Верук. Аҫасем патне кайар. Кунта ларса тӑма...

Микулай. (*Вутӑ каски ҫине ларат*). Лар...

Верук. Ларас-и... (*ларат*).

Микулай. Паян кун аван-ҫке.

Верук. (*кулса*). Аван ӗнтӗ!.. Паррӑх... Пайан икӗ хут шыва кӗтӗмӗр, итту ҫатма ҫук. Каҫатапа анҫах сулхӑнлаца пуҫларӗ.

Микулай. Паҫӑр сирӗн умран иртсе кайрӑмӑр. Еҫ уй ҫухне ӑҫтаҫҫӗ?

Верук. Тимахвисемпе йурласа иртнӗ ҫухне-и?

Микулай. Вара.

Верук. Китхеҫҫӗ.

Микулай. Епĕ ун ђухне сана курасшăвђĕ. Есĕ урама тухасса кĕтрĕм.

Верук. Есир йурласа кайнине куртăм... Кăмăл хуçĕлђĕ те, пахђана тухса йĕтĕм.

Микулай. Мĕншĕн йĕрен?..

Верук. Ху пит хурлăхлă йурлан та. Анне те есĕ йурланинђен тĕлĕнцĕ. Ăçтан йуррине тупнă! тет.

Микулай. Есĕ хаљ кăна йĕрен. Епĕ кайсан, мана манăн та-ха?..

Верук. Мĕншĕн çапла калатăн?.. Ђуна хурлантаран... (*йĕрет*). Ку таранђђен есĕ мана пĕлмелле ĕнтĕ...

Микулай. Ан йĕр, Верук. Есĕ сана пĕлетĕп... анђах çапах ĕненме хĕн. Епĕ санран ђас уйăрлатăп. Темиçе çул сана курмасăр пурăнмалла. Манăн вăрçа та кĕмелле пулĕ, аманăп та... Есĕ ун ђухне мана пăрахăн. Урăх кађђăпа выљăма тытăмăн. Унтан карђа та кайăн.

Верук. Микулай, есă мана ĕненместĕп иккен. Есĕ манăн куççулне курман-и?.. Çук... Микулай!.. (*йĕрет*). Есĕ мана шанмастăн. Хăвăн хăрушă сăмахусемпе манăн ђĕрене тата çунтаран... Çак виç çул хушшинђе те мана ăнланмарăнам?

Микулай. Верук, ан йĕр... Сана ĕненетĕп... Есĕ йуратан мана... (*ђуп-тăвать*). Йуратан...

Верук. Йуратап сана, Микулай. (*ыталаса ђуптăвать*). Епĕ сана ĕмĕрне те пăрахмастăп. Ĕмĕр сана йуратса пурăнăп... Микулай, йурат мана!.. Микулай, ан ман мана!..

Микулай. Верук-ђунăм! (*ђуптăват*). Йуратап сана. Пĕтĕм ђĕререн йуратatăп.

(*Хĕрсем сăвă каласа çывăхарса килеççĕ*).

Çĕнĕ пўртĕн пуçĕнђен,
Тумла йухаĭ вĕçĕнђен.

Верук. Ађасем кунта килеççĕ.

Хĕрсем. Ђуп тăвассăм килсессĕн,
Пăхрăм савни куçĕнђен.

Верук (*тăрат*). Епĕ ђеђексем татса килем-ха.

Микулай. Иксĕмĕр те кайăпăр. (*кайаççĕ*).

Хĕрсем. Ђĕкеç вĕçет çўлелле,
Ларса канаĭ çўçене. (*килеççĕ*).
Тантăш йута кайсассăн
Çав çунтараĭ ђĕрене.

* * *

Хула синђе хурт выљаĭ,
Ђĕмпĕр çинђе ђĕн вылаĭ.
Икĕ йĕлме хушшинђе
Кађђăпала хĕр выљаĭ.

* * *

Çўл ту çинђе çил арман,
Йалан тулă авăртаĭ.
Тулă кулаç тутлă çав
Сарă çăва йуратаĭ.
Ђипер ађа, сар ађа
Сарă хĕре йуратаĭ.

Марйе. Хĕрсем, аĭăр киле. Хĕвел те анаĭ ĕнтĕ. Ђас кĕтў те анĕ.

Марйе йултапĕ. Аĭăр.

Хĕрсем (*йурласа кайаççĕ*).

Çаранлăха çул хыврăм,
Çулахи куна çўреме.

Сар аҫава тус турӑм
Ҫак вӑйӑра выҫма.
(*Верукпа Микулай ҫетҫексем татса килеҫҫӗ*).
Икӗ кӗлет хушшивҫе
Вуник кӑвакал ҫӗпии пур.
Вуниккӗ мар, вуннӑ ҫеҫ,
Манӑн савни кунта ҫеҫ.

Верук (*сӑвӑ калать*).
Пухӑнтӑмӑр, тантӑшсем,
Сӗт ҫине пухӑннӑ хӑйма пек.
Уйрӑлатпӑр, савни тус,
Вӗҫен кайӑк ҫӗппи пек.

Микулай. Йепле аван! Йепле ҫеҫен! Ҫак вырӑна, ҫак ҫӗр шыва йепле пӑрахса каймалла?! Верук, хӑҫан тата ҫапла икӗсӗмӗр ларӑпӑр?

Верук (*питӗ хуйхӑрса*). Таҫан...

Микулай. Мана кунтан кайас пек туйӑнмасть. Хал епӗ тӗлӗкри пек ҫӳретӗп. Те салтака кайнӑ, те кайман... Салтака кайнӑ тесен, ӗненес те килмест. Хамӑр ҫӗр-шыв...

Верук. Пирӗн ҫӗр-шыв питӗ ҫеҫен вӗт.

Микулай. Кун пек ҫеҫен вырӑн сахал пулӗ ҫӗр ҫинҫе. Вӑрман кӑна мӗн тӑрать! Тата мӗнле мӗнле йывӑҫ ҫук. Шултӑра те вакки те; хурӑнӗ, ҫӑки, йахтӑ-ҫӑршӗ-пур те пур. Вӑрмана кӗрсен ҫун савӑнать! Шапҫӑк-кайӑк йуррине йурласа савӑнтарать. Йешӗл курӑксем, ҫеҫексем.. Ҫырли вӑхӑтӗнҫе сырлине ҫийен, кӑмпа вӑхӑтӗнҫе—кӑмпине ҫийен, мӑйӑр вӑхӑтӗнҫе—мӑйӑрне татан. Вилес килмест! Хаҫ.. ӑҫта илсе кайӗҫ... пӗлме ҫук. Ах... ҫаксене пӑрахса каймалла-и ӗнтӗ манӑн? Верук! Йурласа кӑтарт-ха мана йулашкинҫен.

Верук. Мӗн йуратса кӑтартас-ши?
Микулай. Мӗн те пулсан йурла-ха.
Верук. Мӗн йурлас иккен... (*йурлат*).

Акалҫинҫен тухат кӑвак тӗтӗм,
Ҫӳлелех те кайат, ай пӗлт пулат.
Тусӑм инҫе кайат, ай уйрӑлат,
Манӑн куҫҫулсене ай вӑл тӑкат.
Тусӑм! ан кай манран, еп йуратап,
Сансӑр манӑн йепле ай пурӑнас.

(*Йӗрет*).

Микулай. Верук—ҫунӑм! Санӑн сассуна йалан итлесе ларӑттӑм. Йеп-ке манӑн сава пӑрахса кайас. Йеп-ке санран уйрӑлас. Верук, епӗ хам пурӑнӑҫра тем те курмалла вӗт ха. Пӗлме ҫук, тӗрмере те ларма тӗл килӗ.

Верук. Апла каласа мана ан хӑрат. Епӗ саншӑн хал те кунӗн-ҫӗрӗн йӗретӗп.

Микулай. Ҫакӑн пек хӑрушӑ шухӑшсем нуҫа кӗрессӗ ҫав. Верук, шухӑшла-ха! Епӗ ҫамрӑк ҫын. Халӗ вӑрҫа илсе кайасҫӗ иккен. Мӗншӗн илсе кайасҫӗ? Камшӑн вӑрҫмалла? Хамшӑн-и? Атте-аннешӗн? Саншӑн-и? Ех, пурӑнӑҫ!..

Верук. Микулай, мана есӗ ҫыру йарсах тӑр. Хам йатпа йарсан, аттесем пӗлӗҫ. Вӗсем пӗлсен аван мар. Есӗ Тимахви йатӗпе йар, вӑл мана парӗ.

Микулай. Йурӗ. Есӗ те ҫасрах ҫыркала. Нумай ҫыр. Ҫыр хӑвӑн пурӑнӑҫу ҫинҫен, ҫыр йалти пурӑнӑҫ ҫинҫен. Авҫах сана йӑлӑнап: хӑвӑн шухӑшусене манран ан пытар. Каҫҫа кайас пулсан, маттанах пӗлтер.

Верук. Микулай, санран ним те пытарма-

сtăн. Ĕнен мана... ĕнен ес мана... Йăлăнатăп, Микулай...

Микулай. Ĕненетĕп, Верук... (*чуптăват*). Йуратăп...

(*Тархав ÿкет*).

---

## 2. Иккĕмĕш карттинккă.

**Сцена.**—Авантарах тăракан тăвац пӳртĕ. Икĕ алăк. Сĕтел, тенкелсем. Кайри кĕтесре кĕпе-йĕмсем, сурпансем т. ыт. йапаласем çакăнса тăраççĕ. Çула.

---

Петĕр. Микулай кайсассăн, йепле нурăнăчĕ. Хирти ĕçсене çынпа тан пĕтерейменĕр. Килçуртра та тирпейĕ пулмĕ. Хам çӳрейместĕп, куçсем мукалтĕç. Йеххим выльăх-чĕрлĕхсене пăхма ахутах мар. Микулай выльăх-чĕрлĕхе пăхма пит хавасчĕ. Лаша айĕнчи навуса пĕр пĕрчĕ те тăратмасчĕ.

Хĕвекла. Йуратнă ачам та çавă кăначчĕ, ăна та илсе кайаççĕ. Кивпе йалан харкапса пурăнмалла пулĕ. Микулай пур чухне усала сирсе тăракан. Вăл-ку пулсанах—„Пĕлместрем, пичче, кама есир вăрçатăр!“ тетчĕ те, вăрçă та çукчĕ. Микулай кайсанах, Йехимпе кин пирĕн çине кăпкăрма тытăнĕç. Кайиччен хуй авлантармаллаччĕ те çав, есĕ кала марăн.

Петĕр. Хăй те: „авланас“, тесе каласмарĕ, хамăр та шавламан.

Хĕвекла. Хамăрăн сывлăхсем наҫарланҫĕҫ. Микулай киле таварăниҫҫен вилсе те кайăпăр, пĕлме ҫук. Ĕнтĕ Йеххиме хăйне кăна ака-суха тума йывăр пулаҫ.

Петĕр. Вăрçă хур турĕ. Ĕлĕкхи вăхăт пек пулнă пулсан, салтакĕ питех хăратмĕҫҫĕ. Ҫĕрĕ çын тăвата çула йепле те пулсан ирттерет. Ун ҫухне ҫĕрĕ йуласса пĕлет. Халĕ самана урмăшсах кайнă та. Микулай çапах хут пĕлет, ăна çамăлтарах пулĕ. Хут пĕлменнине йывăр, теççĕ.

Марйе (*кĕрет*). Анне, Микулай пиҫҫен хутаççине çĕлесе пĕтертĕм.

Хĕвекла. Çĕлесе пĕтертĕн пулсан, Микулай йапалисене пуçтарса çав хутаççа ҫикес. Есĕ ҫасрах хăтланкала. Кĕпипе йĕмĕсене çӳпçене тутăрпа çыхса хунăҫҫĕ.

Марйе. Йурĕ. (*Кайат*).

Петĕр. Есир йапаласене халех тирпейлесе пĕтерĕр. Кайран, ăсатнă ҫухне, йапала манса йулакан.

Хĕвекла. Мĕн тирпейлессине тирпейлерĕмĕр ĕнтĕ.

Пĕтĕр. Астăвăр çав. Йапалан манас йăли пур.

Хĕвекла. Ик çăкăр, пашалусем, пĕр шăрттан, виç ҫăкăт парса йарас пулĕ.

Петĕр (*кăшт тăрсан калаçат—пауза*). Вăрçă... вăрçă пĕтерет.

Хĕвекла. Микулай салтака кайасса епĕ малтанах сиснĕҫҫĕ. Прийума кайиҫҫенех тĕлĕкне куртăм.

Петĕр. Турă çырнă пулсан, вăл санăн тĕлĕкӳсĕрех кайнă.

Х ĕ в е к л а. Вăл турă çырнипе кайнă халь те, тĕлĕк хăйне уйрăм кăтартать-çке.

П е т ĕ р. Турă çырнинчен иртейместĕн. Çын малашне мĕн пуласса пĕлмест. Астуса ил-ха хамăр йепле пурăннине. Çавăнта, пĕр кашăксăр уйрăлсă тухрăмăр та. Епир кун пек пурăнасса кам шухăшланă. Уйрăлса тухсанах, пĕр пус укçа çукччĕ, çын патĕнче пурăнтăмăр. Унтан хуллен-хуллен пĕчĕккĕскер пӳрт лартрăмăр, кĕлетне те, витине те тутрăмăр, сарайне те çавăртăмăр. Ачасем ӳсее ситсен, икĕ пӳрт те лартрăмăр. Выльăх-чĕрлĕхсем ĕрче пуçларĕç. Кун пек пурăнсан, турра-шĕкĕр. Халĕ ак пурăнăç улшăнна пуçларĕ. Микулай салтака кайни пире пĕтерет.

У р т т и м (*кĕрет, вăл ӳсĕр*). Петĕр йысна? Сывă-и?

П е т ĕ р. Аван-ха. Ача килчах. Лар.

У р т т и м. Ну, Петĕр йысна, Микулайа пайан ăсатмалла-и?

П е т ĕ р. Микулайа ăсатмалла çав-ха. Çавăнпа карчăкпа хуйхăрса ларатпăр.

У р т т и м. Сĕре шеллетĕп Микулайа. Çамрăк çын, пурăнма тытăнайнă. Çавна илсе кайса асаплантармалла-и?! Ку ĕç пулчĕ-и, Петĕр йысна?!

П е т ĕ р. Ан та кала ĕнтĕ.

У р т т и м. Ун вырăнне хам кайăттăмччĕ, анчах илмеççĕ. Епĕ Микулайа хăна туса йăраспăнччĕ. Халь вăл кам патĕнче?

Х ĕ в е к л а. Хреснашшĕ ăна илсе кайрĕ. Халь те çавăнтах мар-и?

У р т т и м. Еппин унта утам-ха.

Петӗр. Ан кай-ха. Хӗвекла, Урттиме ҫиме лартар-ха.

Урттим. Пӗр ҫыртма та кирлӗ мар. Микулайа ӑсатма килӗп. Кайам-ха. (*Кайат*).

Хӗвекла. Урттим пайан та ӳсӗр.

Петӗр. Вăл ӗҫмесӗр тăмасӑ ӗнтӗ.

Марйе (*кӗрет*). Анне, Микулай виҫҫен йапалисене тирпейлерӗм. Ҫимӗҫсене урăх хутаҫҫа ҫикрӗм.

Хӗвекла. Йурӗ. Микулайсем ҫӳресе те пӗтерессӗ пуҫ, ӗнтӗ ҫас киле кӗрӗҫ. Марйе, инкӗне кала-ха, пăтă ҫактăр. Сăра та ӑсса кӗрес.

Марйе. Есӗ ху кала ăна. Пайан иртеппе тутине уссa ҫӳрет.

Хӗвекла. Йурӗ. Есӗ урайне шăлса кай-ха. (Тепӗр пӳртне кӗрет, Марйе урайне шăлать).

(*Йеххим кӗрет*).

Петӗр. Йеххим, урасана тирпейлерӗне?

Йеххим. Тирпейлерӗм.

Петӗр. Лашасене тата сӗлӗ памаллаҫҫӗ.

Йеххим. Патӑм. (*Уҫук кӗрет*).

Петӗр. Сана халех укҫа парас-ха. Кайран пама манса кайăп. (*Укҫине йентӗкрен илсе*). Ме ха аллă тенкӗ. Унта сирӗн укҫа пумай пătес ҫук: утă-па сӗлӗ килтен илсе кайатăр, ҫимӗҫсем те ҫикпӗ тэрӗ. Есӗ Микулайа хӗрӗх тенкипех пар. Унăн мӗнле хутана кайассине есӗ пӗлмесӗр ан кил.

Йеххим. Унта мӗн ытлашши вăхăта иртерсе тăмалла. Микулай хăй те кайран ҫырупа пӗлтерӗ.

Петӗр. Вӑл кайма кайӗ те. Ик виҫ куя кӗтме сана йывӑртарах пулӗ-ха. Йут ҫын аҫи мар.

Улӑк. Апла пулсан, ҫуртсӑр та тӑрса йулӑпӑр-ха.

Йеххим. Пӗтӗ те ҫав.

Улӑк. Салтака кайнӑранпа ывӑлсем урлӑ выртаканне те тӑрӑх савӑрса пӑрахман. Тата мӗн ҫухлӗ кӑрҫама, сӑра пӗтрӗ. Мӗн пур илнӗ сахӑра кӑрҫама тусах пӗтереҫҫӗ.

Петӗр. Пӗтерсе каймӗ-ха. Сире те ҫитӗ. Мӗн кирлӗ мара калаҫатӑр. Вӗсем ӗнтӗ ӑш ҫунниле ҫӳреҫҫӗ. Килтен тухса кайма ҫӑмӑл мар. Вӑл аҫа вӑййи мар вӗт. Тӗлӗнетӗп сиртен! Хӗр-арӑмсен ҫӗнмесӗрӗх тӑмалла. Манӑн ахаҫ те хуйхӑ нумай.

Микулай Хӗреснашшӗ (*арӑмӗпе кӗрет*). Аван-и?

Петӗр. (*Хӗвекла кӗрет*). Айӑр киҫӑрах. Ларӑр.

Хӗреснашшӗн арӑмӗ (*Хӗвеклана*). Ме-ха. Микулай валли шӑрттан хатӗрлесе хунӑҫҫӗ.

Петӗр. Кум, кунтарах лар.

Хӗреснашшӗ. Пырӑ-ҫке кунта ҫа.

(*Улукпа Хӗвекла сӗтел ҫине ҫимӗҫсем лартаҫҫӗ*).

Хӑна (*арӑмӗпе кӗрет*). Лайӑх тӑратра?

Петӗр. Айӑр киҫӑрах. Ларӑр, сикӗр сӗтел хушшинерех.

Хӑна. Микулай кам патне кӗнӗҫҫӗ-ха?

Хӗвекла. Урттим илсе кайасшӑнҫӗ, тата тупрӗ вӗсене. (*Йеххим ерех лартат*).

Хӑна. Йулашки киле кӗнӗ пуҫ ӗнтӗ?

Хӗвекла. Йулашкине пулмалла, каҫ та пулат ӗнтӗ.

(*Шăнкăрав, йурă сесси, купăсна выҫҫани илтĕнет*).

Хĕреснашшĕ. Микулайа кам ăсатма кайăт-ха?

Хĕвекла. Йеххиме йарас терĕмĕр. Петĕре йарсан, куҫĕ те, сывлăкĕ те наҫарланарах.

Марийе (*тĕреттерен пăхса*). Анне пиҫҫесем ҫитрĕҫ.

Йеххим (*ерех тултарса*). Атте, хăнасене тав-туса пар-ха.

Петĕр (*тĕркке илсе*). Тав сире хăвасем! Кум, тав сана!

Хĕреснашшĕ. Тав ĕҫ.

(*Йеххим ерех ĕҫтерет. Хĕвеклапа Улук сăра ĕҫтереҫҫĕ*).

Микулай (*йултташĕсемпе йурласа кĕрет, вĕсен хыҫҫăн аҫҫасем, хĕрсем, Верук та кĕреҫҫĕ*).

Йурă.—1. Еп каймăттăм ҫакă ай салтака,

2. Йатăм шур хут ҫине ай ҫыраннă.

Микулай (*тутăр аллинче*). Ах, турă! Аттеанне килĕнҫе йулашки кун пурăнмалла! (*йĕрет*).

Хĕвекла. Ҫапла ҫав, аҫам, ҫапла... (*йĕрет*)
Аҫасем, ларăр сĕтел хушшине.
Микулай, лар ĕнтĕ ес те.

Микулай (*ларат*). Ех, тăвансем, вăрҫă пире хур турĕ.

Хĕреснашшĕ. Ҫапла пулмасăр. Вăрҫă пулман пулсан, есир салтака хăҫан кайна пулăттăр-ха. Сирĕн ҫуххисем кĕр-кунве тин ҫыраннмаллаҫҫĕ вĕт.

Урттим (*кĕрет*). Тавăссе, тăвансем! Микулай, сана ĕнтĕ салтака ăсатмалла-и?—Ну, ниҫава!

Ан хуйхăр. Пуç пулсан, сывлăх пулсан, вилместĕн. Епир Çĕпĕре çĕр пăхма кайсан, ун йышши кăна мар нуша куртăмăр! Укçа пĕтрĕ, ĕç тупаймарăмăр, пĕр-ик-виç кун выçăллă—тутăллă çÿрерĕмĕр, итту вилмен.

Хĕвекла, Урттим, лар сĕтел патнерех. Çийĕр, хăнасем, çийĕр. Микулай, есĕ те çикеле.

Микулай. Ей, аннем! Тем пек çийĕттĕм, çиме анмасть.

Урттим. Анмасан та çи! Пурăнăçа ĕçмесиме тытать. Атту ес вилен. Ђăн-ђăн... Çимесен... (*пуçне айăлалла ђыкет*).

Хĕреснашшĕ. Микулай ађам, аçу-аннуне йурласа хăвар.

Урттим. Ку-ырă ĕç. Çапла кирлĕ. Аван-аван. Атăр-ха йурлар. Епĕ йурлама пит йура атăп. Микулай мĕн хуйхăрса ларатăн? Манăн çемйе выçах ларат пуђ те, çапах хуйхăрмастăп. Пĕлетĕп ђерkке тĕлне, çавнах тĕллесе тăратăп.

Çапла вĕт, Петĕр йысна?
Мана пĕр ђеркке паратăн пул.

Петĕр. Парас, парас. Лар-ха ес, мĕн ура çинђе тăран. (*Урттиме ĕçтерет*).

Микулай (*йулташĕсемпе йурлат, сынсем йĕреçĕ*).

Акăшсем вĕçеççĕ ай малалла,
Çунавĕсем йулаççĕ кайалла.
Епир кунтан тухса кайсассăн,
Шухăшсем йулаççĕ кил çинђе.

*
* *

Халҫҫен хурăн вутти еп касманҫҫĕ,
Ывăнтарай сылтăм хулсене.
Халҫҫен ку нушана еп курманҫҫĕ,
Ирĕлтерет ҫĕре ҫусене.

***

Урамăра тăрăх хĕрлĕ пылҫăк,
Йепле иштерем-ши еп утсене.
Ай-хай пуҫăм ҫамрăк, ăсăм айван,
Йепле ирттерем-ши еп ĕмĕрме.

Урттим. Петĕр йысна, Микулайа салтака кайиҫҫен авлантармаллаҫҫĕ.

Петĕр. Санăн хĕр тупса памаллаҫҫĕ, авлантарнă пулăттăмăр.

Урттим. Епĕ хĕрне тупса панă пулăттăмха. Ак, (*аллине Верук пуҫĕ ҫине хурса*) Верука илсен сире йурамăсҫ-и?

Верук. Ҫак, Урттим пиҫҫе, ҫын ҫинҫен кулас тесен вара...

Урттим. Ҫав кулни пулаҫ-и?

Верук. Кулни пулмасăр...

Урттим. Пĕртте кулни мар. Тупата. Салтакран тавăрăниҫҫен ăна кĕт-ха. Епир унҫҫен вилсе те кайăпăр. Пĕлме те ҫук вĕт ăна, Петĕр йысна?

Петĕр. Ҫапла ҫав.

Урттим. Манăн халех сывлăх ҫук та, иквиҫ ҫултан вилетĕп еп, ҫăнах вилетĕп.

Хĕреснашшĕ. Урттим, есĕ ерех ĕҫсех сывлăхсăра йертĕн пуҫ-ҫке.

Урттим. Те ҫавăнна, аҫа. Пурăвма нумай пурăваймастăп. Манран малтан арăм ан вилтĕрҫҫĕ, ҫавăнтан хăратап. Арăм вилсен, ҫăкăр пĕҫерсе

паракании те пуԓмӗ. Манӑн арӑм аван вӗт, анҙах епӗ киле ӳсӗр таварӑнсан, вӑрҫаӗ,—ҫавӑнтан кӑна кӑшт наҙартарах. Петӗр йысна, есӗ ман ывӑл аҙана курнӑ-и-ха?

Петӗр. Курнӑ.

Урттим. Вӑл санӑн Микулайран ирттерет, ҙӑнах ирттерет. Ҫиҙҙӗре кӑна, хӑйамат, вӑл мана ӗнтӗ ернеренпе салтака кайас тесе йӗрӗнтерет.

(*Пурте кулаҫҫӗ*).

Хӗвекла. Аҙам, ҫикелӗр те, каймалла пулӗ. Ытла ҫӗре йулсан, хӑвӑра йывӑр пулӗ, ҫул вӑрӑм. Кин пӑттӑва ларт.

Уԓук. Йурӗ. Хӗрсем, сӑра ӑсса кӗр-ха.

Микулай. Ей, атте-анне! Иепле тухса кайам-ши? Есир ку таранҙен мана йуратса пӑхса ӳстертӗр. Вахӑта туртса тӑсайасҙӗ те, ҫук.

Урттим. Йепле тӑсаймастӑн. Пурӑн тата ик-виҫ кун. Мӗн хӑрамалла.

Петӗр. Апла йурамӗ. Айӑплама пӑхӗҫ. Таҫта тытса та хупӗҫ.

Урттим. Хупаҫ ак!

Микулай (*йулташӗссне*). Кӑларӑр-ха мана. Спаҫҫипӗ, атте-анне, пиҙҙе, инке, Марйе саната!

Килтисем (*пурте*). Ан ӳпкеле ӗнтӗ.

Хӗреснашшӗ. Микулай аҙам, аҫу-аннӳне пуҫҫапса хӑвар. Салтак аҙи пуҫҫапаканҙҙӗ.

Урттим. Мӗн пуҫҫапм лла?! Вӗсем кунта ҫӑкӑр кышласа пурӑнӗҫ-ха. Микулай, пит пеллетӗп сана, пит... (*йӗрет*).

Микулай. Анне, ларӑр, пуҫҫапса хӑвараи!

Хӗвекла. Петӗр, Иеххим ларӑр тата, куркӑрсене тытӑр!

Микулай. Хӗреспатте, есӗ те лар!

Хӗреснашшӗ. Епӗ кунтан ларӑп.

Йеххик (аҫҙасене). Есир тухса лашасене кӳлӗр ха.

Аҫҙа (йулташӗсене. Аттӑр, лашасене тухса кӳлер!

Микулай. Инке лармаст-им? Ну, йурӗ...
(йурлат).

Тӑван, лар вырӑна, тыт-куркӑна,
Хӑш урӑртан тытса тайӑлам-ши?
Аттен йуратнӑ лаши ай витере,
Ун йуратман лаши ай урамра.
Аттен йуратнӑ ывӑҙ ай килӗнҙе,
Унӑн йуратман ывӑҙ ай салтакра.

Петӗр (йӗрсе). Санаҭа пӗр пекех йурататтӑм, аҙан.

Микулай. Атте, каҫар, сан умӑнта йепле айӑпа кӗне пулсан та!

Петӗр Турӑ каҫартӑр. Аҙам, пеххил.
Ҫӳренӗ ҫулта турӑ сыхлатӑр.
Сынна усал сӑмах ан ка а.
Наҙҙаҙниксене итлесе пурӑн.
Турра ан ман. Аҫупа аннӳне астусах
тӑр.
Ме, ҫак укҫана кайалла тавӑрмалла
пултӑр.

Урттим. Мӗн наҙҙаҙниксене итлемелле. Пурне те итлесен, пуҫу та ҫитмӗ. Микулай, сынна ан парӑя! Сынна пӗрре парӑнсан, вӑл сана айалах туса хураспӑн. Наҙҙаҙник сана пӗр сӑмах, есӗ ӑна-иккӗ, вӑл иккӗ, есӗ тӑваттӑ. Е! Пурне те итлесен, пуҫу та ситмӗ.

Хĕвекла! (*йĕрет*). Аҫам—аҫам! Пирĕн тăнрана таптама тавăрăнмалла пултăр. Ме, тыт (*укҫа парат*). Ситĕ ĕнтĕ, тăр, аҫам. (*Ҫур куркине Микулайа ĕҫтерет*). Микулай, хăнасене ĕҫтер-ха! Йоххим, лашăра кӳлме тухни?

Йеххим. Аҫасем кӳлеҫҫĕ.

Урттим. Петĕр йысна! ан хуйхăр. Микулайа ҫĕр айне кӳртсе йарсан та, вăл ҫĕмĕрсе тухаĕ. Вăл ҫамрăк ҫын. Вăл пирĕн пеккине пиллĕкĕшне хуплаĕ. Е!.. Хуйхăрма тата. Манпăн хуйхăракан ҫын,—ҫын та мар. Епĕ йĕрекене йуратмастăп. Сывлăх пур ҫухне—ĕҫ те ҫи, выҫа та кул.

Микулай. Тăвансем, каҫарăр! Пурне те ĕҫтерейместĕп.

Пурте. Пирĕ-ҫке. Йураĕ.

Хĕреснашшĕ. Йĕрки кăна каклă. Тата ҫăкăр кастарса пăхас. (*Микулай ҫăкăр касать*).

Уттим (*йурлать*).

> Йĕлĕк епĕ ай аҫаҫĕ,
> Каҫак пӳрнесенҫе ҫĕрĕҫĕ.
> Пĕр-пĕр сарă хĕре еп тус турăм,
> Йалан пĕрле ĕмĕре те ирттерме.

Микулай. Йенле, аван ӳкри-ха?

Хĕреснашшĕ. Пиҫĕн май ӳкрĕ, апла ӳксен, аван пулаканҫĕ.

Микулай. Аттĕ, ҫипер йул! Еп килиҫен сывă тăр! (*ҫуп—тăвать*).

Петĕр. Аҫам, аҫу—аннӳне ан ман. Ҫасрах сыркала!

Микулай. Анне, ҫипер йул! Манпăн пит ан хуйхăр! Турă сывлăх парсан, савăрăнăп. (*ҫуп-тăваҫҫĕ*).

Х ĕ в е к л а. Уйрăлатăн вĕт, аҫам, уйрăлатăн!.. Пире пăрахса хăваран!.. (*пит татă са йĕрет*).

М и к у л а й. Пиҫҫе, атте-аннене ан пăрах! Вĕсене пăхма тăрăш!

Й е х х и м. Каҫар, Микулай, хамăр хуштăмăрта мĕн пулнă пулсан та.

М и к у л а й. Пиҫҫе, ху каҫар! Инке, вăрҫса ан пурăнăр! Атте-аннене пăхăр! Ҫипер йул! Марйе сывă йул!

М а р й е (*питĕ хытă йĕрет*). Ҫипер кай!..

М и к у л а й. Каҫарăр, тăвансем, сирĕн умра йепле айăпа кенĕ пулсан та!

П у р т е. Турă каҫартăр. Ҫипер ҫӳресе тавăрăнмалла пултăр.

М и к у л а й. Хĕреснатте, ҫипер йул!

Х ĕ р е с н а ш ш ĕ. Ҫипер кай, Микулай—аҫам! Турă аҫу-аннӳн килне кайалла ҫавăртăр! Ме-ха, сахал та, ан ӳпкеле! (*укҫа парать*).

Х ĕ в е к л а. Марйе, Микулай тумтирне илсе кил.

У р т т и м. Ну, Микулай, ҫипер кай! Урттиме ан ман. Сана хăна тăвайманăм та, каҫар! Микулай, сана хам аҫа пек йурататтăп. Пит шеллетĕп... (*йĕрет, ҫуп тăвать*).

М и к у л а й. Ҫипер йул, Урттим пиҫҫе. Сана ҫилентернĕ пулсан та, каҫар!

У р т т и м. Каҫар, Микулай, каҫар... Урттиме ан ман!

(*Марйепе инкĕшĕ Микулай йапалисене илсе тухаҫҫĕ*).

Х ĕ в е к л а. Микулай, ҫак пиншака тăхăнса каратна?

Микулай. Мана хуҭ те йепле тумлансан та пырĕ. (*тăхăнтараççĕ*).

Петĕр (*ерех ҭеркки парат*). Микулай, кил-ха!

Микулай (*йултаҭĕсемпе йурлат*).

Шур кăвакал ҭĕппи курас килсен,
Атăл-шыв хĕррине ай анса кур.
Пире, тăванăмсем, курас килсен,
Вутлă хĕç варрине ай пырса кур.
Вутлă хĕç варринҭе кураймасан,
Ҭĕркуç таран йуна ай пырса кур!

(*Микулай тĕшĕрĕлсе анат, Уҭук вăл вăхăтра калат „Хуçкаланнине курассăм килмест", унтан хуллен-хуллен пур те тухаççĕ*).

(*Ҭаршав хуллен анат*).

## ИККӖМӖШ ПАЙ.

**Стсенӑ:** касарма, ҫтанасем тусанлӑ. Икӗ алӑк, пӗр алӑкӗ кӗнтселерне кӗмелли (*унӑн ҫинче „канцелярия" тесе ҫырнӑ*), тепӗр алӑкӗ урама тухаҫ. Кӗтесре пӗр вӑрӑм тенкел пур. Пӗр ҫӳреҫе. Микулай хаҫ салтак, вӑл тневаҫнайра (*хуралта*) тӑраҫ, пиҫиххи ҫумне штик ҫакнӑ.

---

Микулай. Ехе-хе... Самана... Хӑҫан килсе таврӑнмалла, пӑхса та курӑнмасҫ. Йепле килтен тухса кайни, тӑвансемпе уйрӑлни асран каймасҫӗ. Йывӑр килтен тухса кайма. (*Шухӑшласа тӑраҫ*). Мӗн ҫухлӗ ҫын ӑсатма пынӑҫҫӗ! Марйепе Верук сӑртран аниҫҫенех ӑсатрӗҫ. Ҫав йулашки вӑхӑтра мӗн каласмарӑм-ши епӗ Верукла! Мӗн пур ҫӗрене мраттарса тӑнине пӗр-пӗрне каларӑмӑр. Ҫав йулашки вӑхӑта ирттерме йепле пире йывӑрҫҫӗ! Тата, тепӗр йенҫен, йепле ырӑҫҫӗ! Епир ун ҫухне иксӗмӗр те: уйрӑлсан та, пирӗн ҫунсем пӗрле пулмаллине сисрӗмӗр. Йулашкинҫен, ҫуп-туса уйрӑлнӑ ҫухне, Верук ӑнсӑр пулса кайнӑ пек пулҫӗ, шурса кайрӗ... Пире кусран сухатиҫҫенех пӗр вырӑнта тӑрса вӗҫӗмсӗр тутӑрсене сулларӗҫ.

Ахвитсер (*кӗрет, Микулай „честь" параҫ*). Стоишь?

Микулай. Так тошно Ваша Пăлхароти!

Ахвитсер. Здорово!

Микулай. Страви шелам Ваша Пăлхароти!

*(Ахвитсер кĕптселерине кĕрет).*

Микулай. Хм... „Ваша Пăлхароти“ те вĕсене, „суккăр-мишер аҫи“ темелле. Ҫапах пăхса ҫӳреҫҫĕ! Вĕсен хăйсен пурăнăҫĕ ҫинҫен кăшт шухăшламалла. Ҫĕр каҫиҫҫен хăваттирĕсене тавăрăнмаҫҫĕ: йе картла выляҫҫĕ-и, йе аскăнланса ҫӳреҫҫĕ-и. Салтаксене вăрҫма, хĕстерме пĕлеҫҫĕ. Хăшхăшĕ ҫапах ҫын манерлĕ пур.

*(утма тытăнат).*

рас. тва, три... рас, тва, три... рас, тва, три...

Ванҫук *(кĕрет).* Есĕ аван утма вĕреннĕ.

Микулай. Вĕренмесĕр, кашни кун нушалантарсан, вĕренĕн. Нуша кулаҫă ҫиме вĕрентнĕ, теҫҫĕ. Ҫавăн пек вăл. Тăрсан тăрсан утма мар, ҫынна вĕлерме те вĕренĕн.

Ванҫук. Вĕсен, Микулай, вĕрен. Есĕ ҫамрăк салтак. Сяре нушалантарасси хаҫ анҫах, ак пиртен, ват салтаксенҫен, мĕн ыйтмалла?

Микулай. Ҫамрăк салтаксем ҫын мар-ши?

Ванҫук. Мĕн, есир салтак-и?—Есир ҫерый, Микулай, ҫерый вĕт есир, ҫерый, ҫерый! Ҫĕнмест те. Ҫилентĕн-и?

Микулай. Мĕн ҫиленмелле унпăн.

Ванҫук. Есĕ тневаҫнай-им-ха?

Микулай. Тневаҫнай-ҫке.

Ванҫук. Йепле пурăнатăн-ха?

Микулай. Йеррипе пурăнатăп-ха. Есĕ йепле?

Ваҫук. Пӗр майӗпе. Салтака ҫиме аван пулсан, мӗн кирлӗ тата? Халӗ апат аван.

Микулай. Пурӑнӑҫа ҫнсе кӑна ирттерместӗн, урӑх ӗҫсем те тӑвас пулать. (*шухӑшласа тӑрать*). Есӗ пӗр кун Матаксем темерӗне?

Ваҫук. Матаксем. Епир иксӗмӗр те пӗр уйесрен вӗт. Сиртен 20 ҫу рӑмра кӑна. Пирӗн пасара сирӗн йала пыраҫҫӗ. Ҫӗмпӗре те сирӗн йал урлах ҫӳреҫҫӗ. (*Кӗнтселери алӑкне пӗр ҫын уҫать, Микулай хӑраса тӑрать*).

Ваҫук. Мӗншӗн ура ҫине тӑран?—Есӗ пит харатӑн иккен.

Микулай. Хӑрамасӑр. Хӑратса пӗтернӗ ӗнтӗ пире. Халӗ пӗҫӗк ӗҫшӗнех персе вӗлернине калаҫаҫҫӗ. Ху та пӗлетӗн: пирӗн отелениҫе пӗр салтак отеленыйпа тавлашнӑ,—халӗ ӑна тытса кайрӗҫ. Ӑҫта илсе кайрӗҫ ӑна,—никам та пӗлмест.

Ваҫук. Йывӑррине йывӑр ӗнтӗ, Микулай. Пире „тисциплинӑ" тӑрӑх хамӑр тӗллӗн касармаран тухма та йурамасть вӗт. Тӑванусем курма килсен те, вӗсем патне йамаҫҫӗ. Тата кам тӗлне, хӑш вӑхӑта ҫакланан. Кала-ха тепӗр наҫҫалӗнике ҫилли килнӗ вӑхӑтра: „ман патма арӑм курма килнӗ те, тархасшӑн, курма йар", тесе. Вӑл йама мар, вӑрҫса, хӗнсе пӑрахать. „Мӗншӗн ҫак ӗҫти—ҫукпа мана ҫӑрмантаратӑн, санӑн арӑму килни мана кирлех мар", тийейет. Вара пыр та ҫавӑн пеккипе калаҫ. Хӑйаматсем, ҫыннӑн нушине пӗртте итлесшӗн мар!

Микулай. Ҫапла ҫав, Ваҫук. (*шухӑшласа*). Епӗ, аҫа, наҫар тӗлӗк куртӑм. Ҫавна шухӑшласа ӑсран кайатӑп. Хӑратӑп, килте мӗн те пулсан пулҫӗ-и, йе хама пулать-и.

Ваңук. Мĕнле тĕлĕк тата? Тĕлĕк хăш ҫухне ҫăнахах пĕлтерет, епĕ ăна сăнакаланă.

Микулай. Аҫа, пиҫҫесемпе ҫĕнĕ ҫурт лартатпăр пек. Выҫ сарни кун. Ҫынсем нумай, нимене ҫĕннĕ пек. Пурте пуртăсем, пăҫăкăсем йатса пынă. Тытăнтăмăр пура хăпартма, ҫавăнтах мăкласа пыратпăр пек. Епĕ сылтăм алăпа мăка йарса тытрăм та, мăк ăшĕнҫен хура-ҫĕлен тухса, алла йавса тытрĕ те, сăхса та илҫĕ. Епĕ хăраса ăнсăр пулса кайса ӳкрĕм те, хăраса вăрансах кайрăм.

Ваңук. Ку тĕлĕк санăн путлех мар пуҫ. Хăна мĕн те пулсан пулмаст-и.

Микулай. Аван мар пуҫ ҫав, аван мар пуҫ. Малашне хрунта та илсе кайĕҫ. Ваңук, йепле епир наҫар вăхăтра ҫуралнă!

Ваңук. Ан кала та ĕнтĕ. Епĕ салтака кайнăшăн куҫанмастăп, анҫах хрунта кайас килмест. Йут ҫĕртре вилсе выртассинҫен хăрушши ҫух пуҫ тетĕп. Ҫемйе йулсан, кам ăна тăрантса пурăнмалла?

Микулай. Есĕ авланним-ха?

Ваңук (*ҫиленнĕрех*). Авланнă-ҫке! Ĕнтĕ ик аҫа та пур. Аҫасене шеллетĕп. Арăм аптăрамĕ. Хам вилсен, вăл хуҫ те ăҫта та кайĕ. Акҫасене шел.

Микулай. Мĕшĕн арăму ҫинҫен ҫапла калатăн?

Ваңук. Каламасăр, хĕр-арăмăн ҫӳҫĕ вăрăм та, ăсĕ кĕске, теҫҫĕ.

Микулай. Епĕ куркаланă, хĕр-арăмсенҫен хăшĕ арҫынран ăслисем пур.

Ваңук. Пулсассăн та ман арăм пеккисем мар пуҫ. (*Алăк хыҫĕнҫе ура сасси илтĕнет*). Кам тата килет?

Микулай. Полковник пуђ. *(Çеркей кĕрет).*

Ваңук. А-а, Çеркей. Ебир сана полковник, тесе.

Çеркей. Есир мана полковник тăвасшăн-и?

Ваңук. Сана полковник çитмест-и? Елле йенрал пуласшăн-и? Пулассу килсен ђасах çĕлетпĕр. Микулай, санăн кăранташ пур-и, кўр-ха сăрласа йарар.

Микулай *(кăранташ шырать).* Çеркей телейĕпе кăранташĕ те çук.

Çеркей. Есир сăрлаканни пулăр. Епĕ тĕрмене кайса лараканни пулăп. Апав!

Ваңук. Тĕрмере ларса курман салтак, салтак-и? Есир ђĕђĕ ађисем вĕт-ха *(кăкăрне шаккаса).* Ак, шиђђўрен вĕренĕр!

Çеркей. Кунта пурне те кăтартаť-ха, сана кăна мар.

Микулай. Ĕнтĕ виçĕ ђăваш пултăмăр-и?!

Çеркей. Пирĕн рутра тата тепĕр ђăваш пур.

Ваңук. Кам вăл?

Çеркей. Тăваттăмĕш свотри свотнăй.

Ваңук *(тĕлĕнсе).* Ђăваш-и вăл?

Çеркей. Ђăваш.

Ваңук. Епĕ ăна пĕлмен-ха. çавăнпа вырăсла йăнăшрах калаçаť.

Çеркей. Вăл ђăвашне пĕлтересшĕн мар. Епĕ те вăл ђăвашне пайан тин пĕлтĕм. Паçăр иксĕмĕр хăш кĕпĕрнесенђе тырă пулни çинђен калаçса кайрăмăр. Вăл: Хусан кĕпĕрнинђе тырă аван пулаť, тесе мухтанма тытăнђĕ. Епĕ ăна: „хăш кĕпĕрнесем?“ тесе ыйтрăм та, вăл—„Хусанăн“ терĕ. „Ђăваш-им?“ терĕм те, „ђăваш“ тет. „Ађа, тархас-

мăн, епĕ ҫăвашне ҫкисене ан пĕлтер,—хамăн салтаксем пĕлсессĕн, аван мар, мăшкăлама тытăнĕҫ", тет. Епĕ: „мĕн тума пĕлтеретĕп, епĕ аҫа мар вĕт" терĕм.

Ваҫук. Есĕ калама пĕлмен. Хам пулнă пулсан, хăратса каланă пулăттăм (*тĕлĕнсе*). Ак, ас ту ĕнтĕ ҫăваша? Свотнăй пулнă та, ҫăвашне те пĕлтерестĕн мар, йе ахвитсер пулсан?

Микулай (*ҫасрах калат*). Вара ун ҫумне ан ҫыхлан*) та.

Ваҫук. Ăҫта ҫыхланма. Хам ун вырăнҫе пулсан, йуря ҫăваш иккенне пĕлтерĕттĕм. (*пăкăрне шаккаса*). Ак, ас ту ҫăваша, сиртен мĕнрен кайа, тесе калăттăм. Ха-ха-ха...

Ҫеркей. Епĕ кĕнтселерине кĕрестĕнҫĕ-ха. Есир кунтах тăратăр пуҫ?

Микулай. Кунтах.

Ҫеркей. Кĕрес-ха. (*кайат*).

Микулай. Епĕ хуралла ҫӳреме йуратарах маратăп. Кунта пĕр вырăнта тăран, ҫавăнпа аван. Струйира-йе йăнăш утсан, йе „страви шелам" наҫар тухсан, вĕлереҫҫĕ вĕт ҫупгарса. Хăш ҫухне пĕр сынтăн пĕтĕм рут ҫупат. Пуҫна кăпт кăна пăртăн, йăпал айне тăратасса кĕтсех тăр. Тата ун пек ҫухне полковник кӳрсассăн, пĕтрĕ вара, кĕпомесĕр кулмаст. Йепле вăл ахвитсерсене те вăрҫат. (*ҫаврăнса тăрат-пауза*). Ваҫук, епĕ санран ыйтасшăн...

Ваҫук. Мĕн тата?

Микулай. Киле пĕр-ик-виҫ куна тарса кайасшăн, ахаҫ ыйтсан йамаҫҫĕ. Мĕн тăвас-ши?

---

* Сулăх.

Вађук. Ан хӑтлан. Вӑл шухӑша пӑрах: пӗр кун касармара пулманшӑн та вуншар ҫула катӑркана йанине калаҫаҫҫӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑђӗ вӗт.

Микулай. Аттe—аннене курас килет. Анне хуйхӑпах ватӑлса кайрӗ ӗнтӗ. Иртнӗ ҫырура: ђирлӗ выртаӗ, тесе ҫырнӑђђӗ. Хамӑр килтисемсӗр пуҫне, пӗр ҫынна ытла курас килет...

Вађук. Кам тата вӑл, тусу пулђ ӗнтӗ.

Микулай. Тусӑм... тусӑм...

Вађук. Ытла авӑнђђим, ҫӑмӑллӑђђим тусу? Хытӑ йуратнӑ пулђ ес ӑна?

Микулай. Каласассӑн, есӗ манран кулӑн.

Вађук. Мӗн кулмалли пур ун ҫумӗнђе. Ҫамрӑк ђухне ҫав ӑс вӗт нумайӗшӗн.

Микулай. Мана вӑл пит йуратаӗ-ђӗ, халђ те йуратаӗ. Ҫыру тӑтӑшах йаркаласа тӑраӗ. Вӑл калађђӗ: „есӗ килмесӗр, епӗ вӑйӑсене те тухас ҫук“, Йепле хытӑ аманса тавӑрӑнсан та мана кађђа пыма пулђӗ.

Вађук. Есӗ апла питӗ йуратакан тусна тупнӑ. Мана ҫавӑн пек йуратса пулмарӗ. Авлантарма та ирӗксӗртерех авлантарђӗҫ.

Микулай. Ирӗксӗр авланса мӗнле пурӑнӑҫ пулаӗ!..

Вађук. Пурӑнан ҫав пӗрре авланнӑскер! Авлансассӑнах, пӗр-пӗринпе лайӑх сӑмах калаҫман. Пурӑнсан пурӑнсан ађасем ҫуралђӗҫ, вара ирӗксӗрех „арӑм“ тесе хисеплемелле пулђӗ. Епӗ ађа нумай шухӑшланӑ: киле кӳҫ ан куртӑр, тесе, пӑрахса тухса кайма та,-анђах малтан аттe-аннене шеллерӗм. Вӗсемех айӑплӑђђӗ те, мана тӑрӑпрӑм.

**Микулай.** Йуратман пулсан, йепле минҫет турĕç?

**Ваҫук.** Йепле?! Минҫет тунă ҫух паҫăшка ыйтрĕ, пĕр-пĕрне йурататра, тесе. Епĕ ăна „йуратмастăп" тесе каларăм. Паҫăшка: „йуратмастăр пулсан, епĕ минҫет тăвас çук, еппин тухса кайăр", терĕ. Ун ҫухне пиҫҫе хыçалтан аллипе ҫыпса: „апла каламаççĕ ăна, йурататăп" тесе ка амалла терĕ. Епĕ, ухмахскер, „йурататăп" тесе персе йатăм та, минҫет турĕç вара.

**Микулай.** Аван мар пирĕн ҫăвашăн çапла авлантарни, аван мар. Тĕттĕм халăх. Вырăссенех апла мар, теççĕ. Пире, ҫăваша, пĕлменни касать. Вара „словеснăçех" ларан та, тĕнке тухиҫҫен сапа асаплантараççĕ. Хăш ҫухне ҫĕлхе вĕçĕнҫех калайма тăн. „Тисциплинине" ыйта ыйта тĕп тăваççĕ. Вырăссем те хăшĕ пирĕн хăраххăмăр тавăрса калаймаççĕ,

**Ванук.** Ҫăвашсене хут пĕлменни çав касать. Çыру çырас тен, çынна йăлăнмалла. Вырăса йăлăнсан, санран кулать, мăшкăласа пĕтерет. Ҫăвашсем пур те пĕр çĕртĕ мар. Сапаланса пĕтнĕ, пĕрри пĕр пулккăра, тепри тепĕр пулккăра.

**Микулай.** Çыру çырмалла пулсан, ман патма пыр. Епĕ çырса парăп.

**Ваҫук.** Йурĕ, йурĕ. Манăн та кентселерине кĕмеллеҫҫĕ-ха, писсăр тĕмшĕн ҫĕнĕҫҫĕ (кĕнтселерипе кĕрет).

Полковник (кĕрет).

Здорово!

М и к у л а й. Стравн шелам Ваша Высоко-вălхороти.

П о л к о в н и к. Гм... так... (кĕвтселерине кĕ-рет). (Стсенă хыçĕнҫе илтĕнет: „в каторгу, я те-бя в Сибирь, в Сибирь пошлю!" Микулай кĕнт-селери алăк патнелле вырат, итлет. Çеркей тухсан, Микулай алăк патĕнҫен хăраса кайат).

Ç е р к е й. Ах тур, унта çунтарат. Пĕр пис-сăрĕ тăмарĕ те, унпăн пĕтерет,—„в каторгу, в ка-торгу", тет. Епĕ тух та тар! Ҫим-ха, хуллен, та-тах шавлаççĕ. (Икĕш те алăк патĕнҫе итлеççĕ).

(Ваҫук кĕрет).

Ç е р к е й. Пăрахăр çавсене. Ăва кашни ку-нах илтетĕн-çке.

В а ҫ у к (итлет). Хаҫ лăпланнă, илтĕнмест.

Ç е р к е й. Микулай, йепле-ха ыран праçник тăвăпăр? Кунта килти мар вĕт. Пайан ĕнтĕ килте сăра сĕрсе хуҫĕç пуҫ, кăрҫама та хатĕрлереç пуҫ. Шухăшлăр-ха, ыран кăвтăрла: „тавăссе сире, хă-тапа тăхлаҫă" тесе ĕçме тытăнĕç вĕт. Микулай, çавăн пек пурăнăçа тата курайăпăр-ши? (Микула-йа силлет.)

М и к у л а й. Хытă пăҫăркан ее, ан çилле-ха.

(Кĕвтселери алăкĕ уçăлат, пурте тăп тăраççĕ, «честь» параççĕ).

П о л к о в н и к (кĕрет). Дурак, Болван!

А х в и т с е р (полковник хыççăн). Виноват, виновват Г-н Полковник!

П о л к о в н и к. Замолчать!

(Ахвитсер ҫĕтĕрессе тăрат, унтан тухса кайаççĕ).

Вађук. Хăшăр, хĕпăр! Çеркей рута ныратна?

Çеркей. Кĕнтселерине тепĕр хут кĕрес-ха.

(Кĕнтселерине кĕрет).

Вађук. Çук Çеркей тĕслех пирĕн йалта пĕр çын пур. Каснă лартнă çавă. Пит тĕлĕнмелле çын! Хăйне Пĕђђен Паљук, теççĕ, хĕрĕхе йахăна çитнĕ, авланман-ха. Йалти шкулта вĕреннипех „прошшенисем" çырать. Ерехрен тарса каймасть. Епĕ килте ђухне тăтăш ман патма çӳрет. „Йепле-ха, Паљук, ĕççем"? тетĕм те.—„Хм, ĕççем çук пек пырасçĕ, пирĕн ĕç пазăр пулат-и"? тетђĕ. „Сана хĕр тупса парас-ха", тетĕм те.—„Авланма çул çитмен-ха" тетђĕ. Нихçан та ăна хуйхăрнине курман. Унăн шăллĕ авланнă, амăшĕ те пур, хăйсем аван пуранаççĕ. Автђах Паљук килти ĕçе не ĕçлекест, ĕçта килнĕ унта ĕççе-çисе пуранать. Хăш ђухне килне ĕçсе таврăнсан, вара хăйне шăллĕ хĕпетђĕ. Унăн çынна усал самах каласи çук. Çавна пысăкрах вĕрентнĕ пулсан, ăçта, пачăшкана тухмалла йе ђийаккăна!

Микулай. Шăт уђиттеле те пултармалла?

Вађук. Уђиттел йышши кăна-и, шăлт тийӗккĕн пулмалли çын, итту псаломщик пулмалла. Вăл ђиркӳре кăш ђухне йурлать. Хулăн сасса кĕрĕлтеттерсе йарать те, ђиркӳ ђĕтĕрессе каять. Тата ђиркӳ варринђе пысăк кĕнеке йатса вулаçă ђухне, çĕмĕрет вĕт сассипе. „Брати" тесе кăшкăрса йарать те, ђиркӳ ђĕтĕрессе каять.

Çеркей (кĕрет). Ну ташлăр иксĕр те!

Микулай. Çырусем килнĕ-и?

Çеркей. Килнĕ çав, çавăнпа ташлăр те-

мес ӗл-и. Мӗн пӑхса тӑратӑр. Ташлӑр! Ташламасӑр памастӑп.

Микулай. Мана пур-и?

Çеркей. Ак, çийелтех, ташла...

Микулай. Пӗлсессӗн ташлӑттӑм та, пӗлместӗп

Çеркей (сиккелет). Ак çапла (çырупе ӳкерет, Микулай ӑна хӑвӑртрах илет).

Çеркей. Микулай хӑтӑлчӗ. (Ванька). Сана ахаль памастӑп. Мӗн пӑхса тӑран, йар ура хуçса!

Ванюк. Ей тур ӑнсах тӑмӑп. Ех... (ташлать).

Çеркей. Пӑçар-ах çапла кирлӗччӗ. Ха-ха-ха...

Ванюк. Ух... Çитӗ... Лайӑх нумай пулмасть. Çырӑва кӳр!

Çеркей (çырусене шыриш тӑвать). Ача, касар! Сана çыру çук...

Ванюк. Есӗ мана çапла улталамалла-и!

Çеркей Ха-ха-ха...

Ванюк. Ей сана! (Çеркейе хӑваласа кӑларать).

Ванюк. Микулай, каçхине касармара пулатна?

Микулай. Касармара.

Ванюк Сан патна пырӑп-ха. (кайать).

Микулай (пӗччен). Пыр, пыр. (çырупе вулать)·

„Пӗртен пӗр йӑратнӑ, Микулай! Ир те, каç та, ӗçре те, ахаль чухне те манӑн шухӑш сан çинче. Сан сӑмахусем, сан сассу, сан куçусем, сан çӳçӳсем савӑн ултту та йалан манӑн ӑсра. Санӑн çырува илнӗ кун мана Мун-кун праçникӗ пек

туйăнат. Микулай ђувăм! Мĕншĕн çыруна сахал çыратăн? Çыру йарасси мана йывĭр тесе ан шухăшла. Санăн çырури сĭмахусене, пытан туглă сăм хусене, евĕ туглă çимĕç пек ђĭре патне илетĕп Вĕсен манăн ђуна çу сĕрнĕ пек çемçетессĕ. Йывăри сана? Ман çинђен шухăшлатна? Пурне те çырса йар! Йулашкинђен сана йуратса хытă ђуптавтăп. Çыру йар!

Санăн йултăшу Верук (Ђарăнса тăрат, пауза).

Йепле йуратат вĕт мана! Малашне те çавах пулĕ-ши? Мана манĕ-ши? Уйрăлсассăн, пĕр-пĕрне манаççĕ,—ун пеккисем нумай. Верук та тăрсан тăрсан сивĕнĕ-ши? Çук... Ĕненместĕп! Вăл ман манмаст, ĕмĕрне те пăрахмаст! Çавăн пек асли хĕр?—Çук!. Вăл урăх ађана йуратсан, епĕ пулăвас çук. Тытнă ĕçе вăл туса пăрахнă. Хĕр-арăм ĕçне тавраари хĕрсем пĕри те ун ђухлĕ пултараймаççĕ. Арçын ĕçне тума та тепĕр нађар арçын ун патне пырасси инçе. Тата калаçни, йурлани: Хам кăна мар, нумай вата çынсем тĭлĕнеççĕ! Халĕ куç умĕнђех... Праçник кунсенђе пĕтĕм йалти кађђăпа хĕрсем вĭрмана, уйа кайса выљăттăмăр. Верукпа иксĕмĕр вĕсенђен кăшт пĭрнаттăмăр та, калаçса сăмах пĕтместђĕ. Тата иксĕмĕр йурласа йараттăмăр та, пĕтĕм ађа пирĕн пата кĕпĕрленсе пыратђĕç (Ђарăнса тăрат-пауза). Ăçта-ши?.. Пĕр минут кăна пĭхасђĕ унăн кăвак куçĕсене! Ăçта-ши унăн ука пек çўçĕсем? Ăçта-ши, илтĕйесђĕ унăн шăпђăк саси пек сассине!

Уйрăлтăмăр, уйрăлтăмăр!..

(Ђаршав ўкет).

## Виççĕмĕш пай.

Сісенă: лазарет,—пĕр алăк, пĕр ҫӳреҫе. Ик йенҫе икшер кравать ларассĕ, Пĕр краваҫĕ çинҫе Микулай выртать. Вăл пит аманнă. Кравачсем патĕнҫе пĕҫĕк сĕтелсем тăраççĕ.

---

(Сестра Микулайа шыв ĕçтерет, çав вăхăтра ҫарлав усăлать, уйтан сестра Микулайа тирпейелесе вырттарать.)

Микулай. Ах... ах... ах турă... Ей, турă, çырлах...

Ей, турă, çырлах...

Сестра (айккарах). Ҫапах-ши, ҫăваш ҫĕлхиçе идеттĕп?

Микулай. Ах... ах... мĕн тума çуратнă-ши?.. ах... ах... Всрук, есĕ куран-ши епĕ нупаланнине? Есĕ...

Сестра. Есĕ ҫăваш-им?

Микулай. А? а?.. сестра, сестраушăваш еп...

Сестра. Епĕ те ҫăваш. Епĕ Хусан катĕнҫи сын. Есĕ хăтисем тата?

Микулай. Ҫĕмиĕр кĕпĕрнин. Ах... ах, турă...

Сестра. Ан хуйхăр. Епĕ йалан сан патăнта пулатăп, мĕн кирлĕ пулсан, манран ыйт.

Микулай. Сестра!.. Йепле-ха? Есĕ мана çапла калаçа пуçларăна? Пăйаххи кун епĕ хĕпĕртерĕм. Хĕпĕртенипе мана йĕрес килет. (йĕрет).

Ҫ е с т р а (пуҫӗ патне тайӑлса). Ан кӗр, ан йӧр...

М и к у л а й. Ҫук, йӗместӗп... Ҫестра, ӑҫта есе и‑ҫе килнӗ? ӑҫтан сана тура ила‑ килђӗ.

Ҫ е с т р а. Епӗ вӑрҫӑђђен уђђиттӗлнисене тӑраттӑм. Вӑрҫӑ пуҫлансан ҫестрана кайрӑм. Малтан Хусанта тӑтӑм. Халӗ кунта килтӗм. Есӗ мӗн йатлӑђђӗ-ха?

М и к у л а й. Килте Микулай тесе ђ‑нетђ‑с. Салтакра йатпа ђӗннине илтмен. Ҫестра, хӑҫ‑и епӗ ђ‑рӗлӗп? Хӑҫан угма, ӗҫлеме йуракла пулӑп?

Ҫ е с т р а. Йӗвиле ђ‑рӗл‑я‑ха. Ан хуйхӑр. Епӗ йалан сан умӑнта пулатӑп. Епӗ сана йуратса пурӑнӑп. Санӑн аппу пулӑп. Вара сана та, мана та йывӑр пулђмӗ.

М и к у л а й. Ҫестра, апла ан кала. Пире, укеак‑ђулаха йуратаканни ҫук. Ӗлӗк, сывӑ ђухне те пире йуратмасђӗҫ. Вӗсем пийепле те йуратма пултараймаҫҫӗ.

Ҫ е с т р а. Микулай, апла ан кала. Манӑн ђун хурланать. Сирӗн пек мӗскӗн ҫынсене шеллемен пулсан, епӗ ҫакӑнта та килес ҫук. Епӗ килте ђухне сирӗн пек ҫынсене питӗ шеллӑшӑп тесе пуххӑшлаттӑм. Кунта килтӗм те, манӑн ӗмӗт ҫитни — есӗ пулан.

М и к у л а й. Сан пек йӑваш ҫестра епӗ ку таранђђен курман.

Ҫ е с т р а. Ҫук, апла ан кала. Кунта тӗрлӗ ҫын пур.

(Ванђук кӗрет, вӑл аллине аманнӑ, аллине пирпе мӑйран ҫакса йанӑ).

Микулай. Ҫестра, мана ҫыру ҫырса парха. Йепле выртнине киле пӗлтерсе йарасҫӗ.

Ҫестра. Халех ҫырса парӑп. Ей, мӗскӗн... (ҫӑпашлат).

Микулай. Аттесен ҫырӑвӗ ҫакӑнта, минтер айӗнҫе выртат. Ҫестра, тархасшӑн, ҫавна пӑхса ҫыр!

Ҫестра (ҫырупе илет). Кайах-ха, ҫырса килем. (кайат).

Микулай. Йурӗ. Ах... ах..

Ваҫук. Микулай, есӗ мар-и?

Микулай. Епӗ.. сана паллимастӑп.

Ваҫук. Епӗ-Ваҫук. Пӗлгӗр Ҫӗмпӗрте иксӗмӗр пӗр рутра тӑнаҫҫӗ. Есӗ хрунта мавран малтан тухса кайрӑн.

Микулай. Е!. Ас тӑватӑп. Ваҫуким-ха есӗ

Ваҫук. Ҫавӑ, ҫавӑ. (Виҫӗ салтак кӗреҫҫӗ, вӗсем картла выҫама тытӑнаҫҫӗ).

Микулай. Ваҫук! Епӗ пит хытӑ амантӑм.

Ваҫук. Нумайтанна выртатна?

Микулай. Ёнтӗ ан кала та. Нуша куртӑм. Тата хӑҫанҫен ҫунмалла?!

Ваҫук. Аттака кайнӑ ҫухне амантри?

Микулай. Аттакра, Ваҫук, аттакра... Виҫӗ аттакран сывӑ тухрӑм, тӑваттӑмӗшӗнҫе ҫаклантӑм.

Ваҫук. „Аттакка“ тени ахаҫ перкелени мар ӗнтӗ! Епӗ те сулахай алла кӑшт амантрӑм. Сана йепле амантрӗ?

Микулай. Аманнӑ ҫухнӗ ак ҫапла пулҫӗ

ĕç. Пирĕн иртен пуçласа, пĕр ҫăранмасăр тупăсемпе пеҫĕç. Ĕнĕ меслетлĕ те пеҫĕç. (Ун ҫухне нимĕҫсен аккупсене йăлт тикĕслесе пĕтернĕҫҫĕ.) Штăкран пăхатпăр та, пирĕн снарятсем нимĕҫсен аккупсем çине ӳкеççĕ те, йывăç татăксем çӳлелле сирпĕне сирпĕне кайаççĕ. Епир хатĕрленсе тăратпăр. Хĕвел аннă, каç пула пуçлавă. Рутнăй аккупран тухма кăшкăрса йаҫĕ. Манăн ҫĕре çурăлса кайрĕ. Тухрăмăр. Пĕр вунă хăлаç кайсан, выртрăмăр та, перетпĕр. Нимĕҫсем айакра. Тытăнҫĕç вĕсем пирĕн çине снарят хыççăн снарят йамă.—Ни та кайса кĕме те çук. Çĕр ҫĕтĕресе кăна тăрат. Йĕри таврари вырăн вутра йавăнвă пек туйăнат. Унҫҫен те пулмарĕ, пĕр снаряг ман хыçак ӳкрĕ. Хама пĕтĕмпе сывлăшпа çӳлелле çĕклесе илҫĕ, çан çурăм сăрăлтатса кайрĕ, айак пĕрҫине пĕçерсе илҫĕ. Епĕ ăнсăр пулса выртнă.. Тепĕр кунне чин ласаретра ăна кĕнĕ. (Шухăшласа тăрат.) Наҫар манăн пурăнăç, Ваҫук, наҫар! Пар-ха шыв!

(Ваҫук ĕçтерет.)

I Салтак. Мой рубль!

II Салтак. Нет, мой!

I Салтак. Нет, мой.

Микулай. Калаха вĕсене хуллентерех тесе.

Ваҫук. Ҫитте, полҫной!

I Салтак. Уйди ты! Вздумал указывать!

Ваҫук. Вĕсенҫен ырă сăмах илтетне. (Шухăшласа тăрат). Микулай, астăватна: Ҫĕмăрте

кӗрре есӗ типӗваԉпӗйра тӑнӑ ԏухне мача усал тӗлӗк каласа кӑтартрӑн.

Микулай. Мӗн?.. Мӗн каланӑ тен?

Ваԋук. Тӗлӗк курнине каларӑм.

Микулай. Е!. Ҫапла. Ҫав тӗлӗк ахаԉ пулмарӗ. Ӑна курсанах, пӗр ерверен анне вилпине пӗлтерсе ҫырва ҫырса илтӗм. Тепӗр ерверен хрунта тухса кайрӑм. Нуппа куртӑм, курман тесе калама ҫук. Ӗҫтӗ пӑлтӑк иетрӗм. Манран ҫывӑхрӑ ҫын пулассин пулмасӗ.

I Салтак. Ты жулик, сволочь!

II Салтак. Э ты, голодобый.

I Салтак. Жулик, жулик! Я! (ԏӑмӑрӗпе йунат.)

Микулай. Тата кала-ха, ԏарӑнԏӑр.

Ваԋук. Ԏишше! Не храшша.

I Салтак. Я тебе дам не храшша! Вишь ты!..

Ваԋук. Вӗсем инкеҫҫӗ-и!

(Картла выԉ каносма тухаҫҫӗ).

Микулай. Ҫук, пулмасӗ.. Мӗн ԏухлӗ вырттатӑп, йывӑртан йывӑр пулса пырат. Кӑҫхине сывӑрма памаст, йалан сурат. Ҫимесе анмаст (шухӑшласа тӑрат — пауза.) Ваԋук! Сан, камиҫҫи хыҫҫӑн киле йарӗҫ. Манран малтан кайӑн. Ԏӗмпӗр урлӑ кайсан, пирӗн йала кӗрен пуԉ. Вара аттесем патне кӗрсе тух. Йеплӗ выртнине каласа кӑтарт. Пит хӑратсах ан кала (шухӑшласа тӑрат.) Сана калам-и еп.. Ҫук.. калас мар... Унпӑн мӗн пулат?.. Хам йамиԏи, Марӗене, каласан, вӑл кӗлтерӗ..

Ваԋук. Кама-ха вӑл?

Микулай. Манăн Верук йĕтлĕ тусăм пур, çавна пĕлтерессĕн.

Вађук. Есĕ ун çинђен мана каласа кăтартнăђĕ.

Микулай. Апла... Çавна-çавна, Верука... Ай-йай... Вађук, шыв пар-ха. (Вађук ĕç ерет). Теплĕ, Вађук, ша ђĕк сахал. Епĕ тĕленетĕп! Мĕн кирлĕ-ши сычсене вăрçма? Мĕн çитмест-ши? Аманнăшĕн салтак ене хĕрессем парасçĕ. Акĕ, вăл мана ђĕртет-ши?! Мана сывлăх кирлĕ! Мана пурăнăç вăйĕ кирлĕ! Епĕ çамрăк! Манăн пурăнас килет! Мĕншĕн амантрĕç-ши мана?! Йăрен ăпĕ айăпла? Ех, пурăнăç!.. (пуçне минтер çине ђыкет, йĕсеклет.) Вађук! Çынсем хал ухмах. Мелелле та çаплах пулĕ-ши? Турă ђармĕ-ши вĕсене? Хăçанђен пырĕ ку пуша?

Вађук. Тĕлĕнмелле! Ăçтан турă ђастăр! Те пур вăл, те çук... Хамăр ухмар, çавăнпа пушалантарассĕ. Пирĕн рутнайах калаççĕ.—Ухмах есир, теççĕ. Хăçан çак вăрçă пĕтĕ, те е пытаттăмăр та, хăçан хăвăр вăрçма ђарăнатăр, çавăн ђухне пĕтĕ, теççĕ. Питĕ ăслă сынсем! Салтаксем хăйне пиг йуратаççĕ! Мĕскĕн, аттакра вăççĕ.

Микулай. Çапла, Вађук. Çынсем хал çирине çеç пăхаççĕ. Йăлсенђе те, хуласенђе те çавăн пекех. Кам аван тумланать, кам пуйан, вăл пур çĕрте те ђаплă. Ăна пурте пĕлеççĕ. Вăл сывлăхлă. Вăл хăйĕн ĕçне кăна тăвать. Çыннăн ăсне, ђĕрине пăхмаççĕ те, - вăл кирлĕ мар пек. Пурăн те пурăнас килет! Пурне те çак çут тĕнђе хаклă вĕт! - Çамрăк çынсем... вилђсе, кулсе, çĕле-

се сўрес вырăнне... сурансем, ђирсем... Ҫыннăн мĕлки мава хăратат! Мĕн пур кăвак тумтире манăн курас килмест! Ах... айай... Мана йывăр...

Ванђук. Микулай, калаҫса ывăнтăн пулĕ, ҫывăрмастна?

Микулай. Ҫывăрас.. йывăр... ҫывăрас...
(Ванђук Микулайа витет, уткаласа ҫўрет те, кайлах Микулай патне пырат).

Ҫывăрђĕ... (уткаласа ҫўрет, халăх йенне пăхса).

Шел аџана, питĕ шел!..

(Ҫестра кĕрет, Микулай патне хуллен пырат).

Ванђук. Ҫестра, вăл ҫывăрђĕ.

Ҫестра. Ҫывăрђĕ-и? Ҫывăрђĕ пулсан, хуллен. Есĕ те ђăваш-пм?

Ванђук. Ђăваш.

Ҫестра. Ата, урăх ҫĕре кайса калаҫăпăр. (Кайаҫҫĕ).

Микулай (кăшт тăрсан аташма тытăнат).

Ав, ҫестра, кунта килеҫҫĕ, илмайăн... Ҫитеҫҫĕ... ҫитеҫҫĕ.. Ав! переҫҫĕ... Илтетре?... Ав тата переҫҫĕ... Снарятсем ўкеҫҫĕ... Пăрăнăр, пăрăвăр!.. (тискер сасла кăшкăрса йарат) А-а-а-а-а-а! Марийе, Верук, есир те кунта-и? Ђасрах килĕр! Ав, ўкет, ўкет!.. Выртăр, выртăр!. Йепле кил ĕр, йепле ҫитрĕр? Калăр ђасрах... Аха-аха-аха! Ҫапла, ҫапла.

Ав, анне те килет. Мана курђĕ, йĕрет... Анне, анне!.. Ан йĕр!.. Епир кунта!.. Епир виҫҫĕн!.. Вăл килме хăрат... Марийе ђув! Ҫавăтса кил!

Ҫасрах тыт ӑна! Тыт-тыт! Укрӗ, ӳкрӗ!.. Ҫас-ҫас!.. Аа-ах-ах-ах (тискер сасӑпа). Ҫӑраймарӗ, пӗтрӗ! (ҫаранса тӑрать—пауза.) Верук, мана курасшӑн килтӗне? Йепле хӑрамарӑн? Ав татах снарят! Кунта, кунта! Ӳкрӗ, ӳкрӗ! Тӗтӗм тухать! Кунта тар! Кайар, ҫасрах тарар! Ав аккуҫран тухма кӑшкӑрҫӗ! Стой!.. Ӳкет, ӳкет! А-а-а-ах!.. (тискер саспа).

(Ҫаршав ӳкет).

## Тӑваттӑмӗш пай.

**Стсенӑ:** —пӗрремӗш пайри иккӗмӗш карттинкӑн стсенийех, - хӗресђен ҫурђӑ; сӑпка ҫакӑнса тӑрӗ, Улђук ађине сулать.

---

Улђук (ађине сиктерет). А-а-ай, ађана... А-а-ай, ађана!..

Йумӑҫ-карђӑк. Килти вилӗ тӑрӑх ӗҫир нуша куратӑр! Ађусем те ҫавӑнпах вилеҫҫӗ. Кута пурӑнас ҫук ҫийӗнђе емеллемесен.

Улђук. Аппа, мӗн тумала-ха ӑна?

Карђӑк. Вилӗ йатне асӑнса икерђӗ пӗҫермелле. Вӑл икерђӗ татӑксене кӗлӗрен тухиђђен масар ҫине кайса,—сана асӑнса икерђӗ пӗҫертӗм, ҫак икерђӗсене йышӑн, мӗн кур усал—сиккере сир, ађасене ан вӗлер, тесе тата тата пӑрахмалла. Унтан, ђиркӳре турӑ-амӗш умне ҫурта лартса кӗл—ту: хӗрӗх икӗ хут сӑхсӑхса пуҫҫан. Ҫапла тумасан, йурамасть. Ҫамрӑксем вӗт есир!

Авалхи йӑлана пӑрахма тӑрӑшатӑр! Ҫавӑнпах икек-сиккер нумай куратӑр! Пирӗн пек вӗт ҫынсем калание итлеместӗр! Кайам ха епӗ. Тата тепӗр ҫӗре ђӑнпӗђђӗ-ха мана.

Улђук. Аппа, кунпӑн мӗн ђухлӗ пletӗн-ха?

Карђӑк. Виҫӗ укҫа хуть те ӑҫта та мана параҫҫӗ. Кӗле ҫӳлесе парсан, хамах емеллесе йӗтерӗттӗм.

Улђук (укҫа илсе парать). Спаҫҫипах сана. Ме-ха, тыт.

Карђӑк. Ђипер йул! Кирлӗ пулсан, лашапа пырса ил! Епӗ пурин патне те утсах ҫӳрес ҫук. Ҫапла ту! Ђипер йул!

У ђ у к (йеатаӑ). Ђиӗр кӑй-ха... Ӳлӗмрен тата килӑр. (Карђӑк кайаӑ).

И е х х и м (кӗрет). Мӗнтума ђӗнсе килен ҫав есрелӗ карђӑка?!

У ђ у к. Ан аташса тӑр! Есирех пӗтеретӗр ман аҫасене!

Й е х х и м. Кӳр-ха, кӑшт ҫикелер! Кӑнтӑрла ҫитрӗ пуђ. (Кантӑра йавӑт).

У ђ у к (ҫимӗҫсене сӗтел ҫинӗ лартаӑ). Лар тата! Мӗн аппаланса тӑратӑн!

Й е х х и м (ҫиме ларат). Аттесене тухса ђӗн! Пӗр ҫикӗ ђухне пур-те ҫийӗр.

У ђ у к. Йалап весене ђӗнсе ҫӳре. Пӗлмеҫҫӗм ҫимелпине! . (тухса ђенет, кӗрсен).

Сивӗ пайан.

Й е х х и м. Йалӑн улмачӗ пӗҫерен, пӗррӗ салмапӗҫер-ха.

У ђ у к. Салма пӗҫерме ӑарҫа ҫинахӗ пур-и?!

Ҫӗпах кӑшкӑрса ларӗт!..

Й е х х и м. Ырӑш салми ту!

У ђ у к. Йалап пырӗшӗн кастарса ларӑт. (Марийепе ашшӗ кӗреҫҫӗ).

У ђ у к. Кӑшкӑрса ҫӳре сире, хӑвӑр пӗлместӗр.

П е т ӗ р (салтӑнаӑ). Вутӑ таткаларӑмӑр. (Ҫиме лараҫҫӗ).

У ђ у к. Тӑрантнӑшӑн спаҫсипӑ каламалла! Ав, ал—урасӑр ађӑр натне кайса тӑранӑр! Ҫыруве пӑхса тӑранӑр!

Й е х х и м. Мӗн кирлӗ мӗра калаҫса ларен!

Кам пӗлет малашне мӗн пуласса. Спаҫҫипӑ, хама салтака илмен. Хам та ҫӑлах пулнӑ пулсан! кам тӑрантвӑ пулӗҫҫӗ хӑва?

Уҫук Есӗ те ҫавсем пекех! Ҫаван ҫи, Вилӗр, пӗтӗр! Санран аванни те пулӗ!..

Урттим (кӗрет). Мӗн кӑшкӑратӑр тата? Аван пурӑнатра? Сывӑ-и? Апат тутлӑ пултӑр!

Петӗр. Ата, киҫах, Урттим. Сӑмах ҫукран, сӑмах тупӑнат вӗт. Лар ҫиме!

Урттим. Ҫийӗр-ха ҫсир, ҫийӗр. Хаҫ ҫийес шухӑш-и. Ёнер епӗ пиҫҫесемпе ӗҫсе, ҫапӑҫҫа пӗтнӗ-ха. Сӗре ӳсӗр пулнӑ ҫав, пӗртте астумастӑп. Пайан, ҫитменнӗ, мухмӑрӗ пӗтерет тата.

Петӗр. Ыгла ҫӗтӗн, Урттим. Пӑрахмалла ҫав ерехе.

Урттим. Вӗрепнӗ йапалана ӑҫта пӑрахатӑн, Петӗр йысна. Мантан пӑрахасси пулмаст куҫ ӗнтӗ. Уҫук, санӑн сыпмалли кӑшт пур-и?

Уҫук. Ҫук вӗт, йулман.

Урттим. Санӑн нур терӗҫ-ске? Ахаҫ памастӑн ес. Укҫинҫенан хара. Хаҫ хам ҫумра ҫук та, ӳрсех парӑп. Мана сӑрккавушкӑ кӑна кирлӗ.

Йеххим. Пулсан пар, мӗн ҫынна кӗтерсе тӑрав. (Уҫук тӗпӗр пӳртне кӗрсе кайат).

Уҫук (сӑрккавушкӑ илсе тухат). Ҫак кӑна. Кӗленҫи те тасах мар та, ерехӗ те хӑватлах пулмарӗ.

Урттим. Пырат. Ссна хырӑмне ыраш пӑсмаст, тесҫӗ. Ку ман хырӑма пасмӗ-ха. (Ҫурине ӗҫет те, кӗленҫине кӑсйине ҫикет).

Урттим. Кăленҫине кӳрсех парăп. Ак! Мухмăра уҫсах йаҫе-ха ку. Сыва пулăр-ха. (Кайат).

Петӗр. Ҫипер кай. Пулат вӗт ҫыв! Вал ерех ӗҫсех ӗнтӗ вилет.

Уҫук. Хӗрсем, ҫасрах тăрах та выҫăхсене улăм кӳрсе пар!

Марйе. Вăсене нумай пулмаст панăҫҫӗ.

Йеххим. Есир выҫăхсене ыраш улăм парăр! Угă лашасене пăма кирлӗ. Ҫава тухаҫҫен нумай угă кирлӗ-ха. Выҫăхсене угă памасан та йурĕ. (Марйе сетел хушшинчен тухат, тумлават те пӳртрен тухат).

Петӗр. Йеххим, Микулайа ҫыру йамаллаҫҫӗ. Пӗр ерне ытла ӗнтӗ ҫыру килмӗ. Ҫавна ҫырса пар-ха! (Шухăшласа тăрат). Йале тăрат-ӗ и, мӗскӗн? Йурăхсар пуҫ ҫав, йурахсар пуҫ. Ҫырусне те хай ҫырайман.

Йеххим. Енӗ хаҫ уппа аппаланса лараймастăп. Ҫырăпар-ха вахăт пулсан (Йеххим тухат).

Ыйткалакан (кӗрет). Пуҫтарса ҫӳреттӗм те,-ҫунса кайнă кетсем. Шел те пулсан, парăрҫҫӗ!

Уҫук. Йăлан пирӗн ната ыйткалакансем килеҫҫӗ. Урăх килсене кӗнине курман! Ҫук манăн пама ! Иавашшине кура есир мăшкăлатă ! Пӗр парсан, кӗресех укеҫҫӗ вара.

Ыйткалакан. Инке, инкен курнипе ҫӳретпӗр-ҫке. Ҫăрмантартăм пулсан, каҫар! (тухса кайат).

Уҫук (ҫашка-тирӗксене пуҫтарат). Хамарăн та инкен нумай: ав аҫасем валсе пыраҫҫӗ.

Ашше (вӗлӗм туртма тытăнат). Кин, шăрпăка ăҫта хуна?

У ḑ у к. Тăтăшах ţĕлĕкне пăккаса ларать! Шăргăк мĕн хакне пĕлмест! Таран, шăрпăкне те, тапакне те илсе пар. (Шăрпăкне илать). Ака, ме! (Тухса кайать).

П е т ĕ р. Ăстан çурать?.. Пĕртте çамах тирпейĕ çук. Ыйткалакана çапла каламалла-и? Сăвран вăл тăпăлтарса илмест. Марьене иксĕмĕре çĕнĕшĕн пĕтерет тата! Мĕн варçмалла пире. Марье нер ĕçрен те йулмаст: выḑăх-ţерлĕхсене пăхать, вуттине татать. Лаш чăриţĕнех вăл кăмакине хутса йарать, йашкине пĕçерет. Мĕн пирĕн тата?! Унта-кунта хам та кăштăртатса çӳретĕп-ха. (Шухăшласа тăрать). Йепле тӳсет çын, çавăнтан тĕлĕнне! Тура çынна пысăк тӳсĕм пара пулнă! -Пурăнна курăнасра мĕн тусле хуйха пулман çкинан илтмен! Çапах ку таранччен кăштăртатса пурăнатăп. Ак, арăмĕн тӳсĕме патартарах пулнă. Вал хуйхăрмах вилтĕ... Микула салтака кайни пуриншех пĕтерчĕ ăна. Мăн-таран илмасс! Аççе курмасарах вилсе кайрĕ. Пĕр ачаççĕн, кин та макăрса хыта тарăхать ăна

М а р ь е (кĕрет). Çур-çĕр йеттĕн пăскер пĕлĕтсем хупарласа килеççĕ. Çил те пит вайла тухрĕ.

П е т ĕ р. Çанталакĕ те йалан улшанса тарать. Хулсем ĕнерхине çураççĕ, çавна пулнă ĕнтĕ вăл.

М а р ь е (тĕрĕ тĕрлет). Аттĕ, йепле пурăнмалла ĕнтĕ пирĕн. Мĕнле ĕç патне пыр, йурăймастăн. Ивке елекле санипе пĕтĕç йалапах хенет. Çук, аттĕ... (йĕрет) Ни кунта пурăнаймастăп...

П е т ĕ р. Ăçта кайас тен-ха, хĕрем! Каţţа

кайас-тесен,-Микулай таварăнаймарĕ. Вăл килĕҫтен кайсан, Микулай сана ĕмĕрне ҫиленсе пурăнĕ.

М а р й е. Аттте... кунта ҫăтассине епĕ ҫăтрăм. Малашне патак ҫисе пурăнаймастăп. Микулай пиҫҫе епир йепле пурăннине хăй те пĕлет.

П е т ĕ р. Ентĕ йалтах пуҫ ҫаврăнҫĕ! (Тепĕр пÿртне кĕрет).

М а р й е (йĕҫҫев). Ман пек хурлăхлă хĕр йалта та ҫук. Ытти хĕрсем праҫниксенҫе тумланса ҫÿреҫҫĕ. Епĕ анне вилнĕренпе урана пушмак тăхăнса курман, никамран та йшă сăмах илтмен Мана праҫниксенҫе те кăвма памаҫҫĕ,--праҫникĕ те праҫник мар! Ивăр: аннесĕр пурăнма! Ех мăн-тарăн анни! Мĕншĕн вилҫĕ-ши?! Мĕншĕн епĕ телейсĕр ҫуралнă-ши?! (йĕрет).

В е р у к (кĕрет). Аван-и?

М а р й е. Аĭа килҫах, Верук.

В е р у к. Е ĕ йĕместне?

М а р й е. Ҫук...

В е р у к. Пиҫҫусем ăҫта?

М а р й е. Пиҫҫе карташĕнҫе ĕҫлеҫҫĕ, инке йала ҫупрĕ пуҫ-ха. Вăл килте тăра пĕлмест вĕт! Йала кайат те, кунĕпе ҫÿрет, мана ҫисе ҫÿрет вара.

В е р у к. Микулай халĕрех сире ҫыру йанă-и?

М а р й е. Хаҫк-аҫҫăн илмен. Тепле пурăнат... Сана тăтăпах йараканҫĕ, халĕ йанă-и?

В е р у к. Халĕ йаман ҫав. Мана ҫыру йанине аҫусене ан пĕлтер!

М а р й е. Мĕн тума калатăп но. Епĕ аҫа мар вĕт.

В е р у к. Микулай кайранхи ҫырунe питĕ хуйхăртса ҫырнăҫҫĕ.

Марйе. Вăл çыру кунта-и?

Верук. Кăсйарах.

Марйе. Вула-ха, мĕн çырат!

Верук (çырупе илсе). „Йуратнă Верук! Ҫунтан йуратса сана кысăк салам йаратăп. Епĕ ăçта выртнине пĕлсессĕн, есĕ йĕрсе, макăрса вилĕн. Ҫын тĕрмере лараŧ, тетнĕр. Вăл пиŧĕрсе илнĕ тăватă çтаналă пÿлĕмре ларни пулаŧ. Тĕрмери çын, сывлăхлă пулсан, çапах сĕре нушаланса пурăнмасŧ пуљ.

Епĕ, тĕрмере мар, тамăкра çунатăп пуљ, тесе хисеплетĕп, анҫах вуҫĕ кăна çунса тăмасŧ. Йĕри тавра пăхсан, санăн йуратнă çынсем çук. Вĕсем санран ине. Есĕ шухăшланине, есĕ нушаланнине илтмесçĕ, пĕлмесçĕ. Ёлĕкхи Микулайа халҫхи Микулай çумне тăратсассăн, есĕ пăхса хăраса кайăн. Ёлĕк манăн ÿт-си ҫил йĕҫĕ: мĕн ĕç хуш, тăваттăмҫĕ. Халĕ епĕ йурăхсăр, халĕ епĕ—„çур-çын". Анҫах пурăнăçа йуратнăçемĕн йурата пуçларăм. Хам çуралнă çĕр шыв, хамăн тăвансем асран каймасçĕ. Верук-ҫунăм! Нумай сана кĕттертĕм.

— Касар! Пирĕн шухăшсем те вăйлă, анҫах вĕсенҫен вăйли—пурăнăç мĕн пур тĕпĕ тымарĕсемпе. Мана çине малашне шанасси пулмасŧ. (йĕреçсĕ.) Ху йепле шухăшлатăн, çапла ту! Анҫах сана ĕмĕрне те манас çук. Виҫнĕ ҫухнехи кайранхи сăмах сан çинҫен пулĕ. (Верук çырупе хытараŧ).

Петĕр (кĕрет). Ах, тур, ывăнтăм пайан. Ҫыннăн вăхăт çитсен, пулмасŧ иккен. Пурте вăхăтра. Ёлĕкхине астусан, халљ ăçта? Çамрăк ҫух-

не, авлансассăнах, Хĕвеклапа-пĕрре вутта кайрăмăр. Çыркаран хăпарнă ҫухне пĕр лашамăр ҫăхăмларĕ. Хăвалатпăр—туртаймаст. Çаптартăмăр çаптартăмăр—нийепле те илмест. Капла кулмаст терĕм Хĕвеклана.—Хамăр туртса хăпарас! Аçтан туртан? тет Хĕвекла. Тытрăмăр та, çăмăлах туртса хăпартăмăр! Унҫухне Хĕвеклан та вăйĕ пурҫҫĕ çав. Пăх-ха! Лаша вăйĕ пулнă вĕт! Халь ăçта?! Сĕре ватăлса кайрăм ĕнтĕ. Тем пек ĕçлесҫҫĕ. Çук, вăй çук! Пулмаст ĕнтĕ. Ах, туртур. Микулай таврăнаймарĕ тата! Çынсен салтакĕсем таврăнкаласçĕ. Пирĕн çук! Вăл килиҫҫен хамăн вилес марҫҫĕ—ха. Хам вилсен килте путне кураймĕ. Авлантараканни те пульмĕ.

Верук. «Килсен, мĕн пулĕҫҫĕ-ха унта..! Вăл хĕрне хăйех тупаĭ.

Петĕр. Аманса килсен, каҫҫа пыраканни те пульмĕ.

Верук. Тупăнĕ-ха.

Петĕр. Кам тупăнтăр!.. Есĕ ăна каймастăн, тепри те çавăн пекех.

Верук. Илсен каймасăр....

Ваҫук (ҫӳреҫерен шаккаĭ). Ей, хăваттире йăратра?

Петĕр. Хăваттир ыйтмаст-и çав?

Марйе. Хăваттир тет, салтак ку.

Петĕр. Ку, тăманта, ăçта кайса кĕтĕр,—йăрас, кăшкăр.

Марйе. Кĕр, кĕр!.. (урайне шăлаĭ).

Ваҫук. Кĕрет Ат, тур, тăман! Аван пурăнатра? Аван-и, пиҫҫе? Аван-и. йăмăксем? (Алă параĭ).

Килтисем. Аван-ха! Аĭа, киҫах!

В а ђ у к (салтак хутаҫҫине хыват).

Микулай ашшёсем есир пулатăр-и?

П е т ĕ р. Есир. Манăн Микулай та салтакра вĕт.

В а ђ у к. Ăна епĕ пĕлетĕп.

П е т ĕ р. Марйе! Инкўсене тухса ђĕн-ха, хăна килнĕ, те! Сăмавар ђăртсе йарăр! (Вађука.) Салтăн, хăта, тумтирне пăрах. Есĕ ăҫтан килетĕн-ха?

В а ђ у к. Мускавран тухрăм. (Йеххимпе Улук пўрте кĕреҫҫĕ).

П е т ĕ р. Ăҫта: ласаретра выртнăђђĕ-и? йе пулккăран курма йађĕҫ-и?

В а ђ у к. Епĕ ласаретра выртнăђђĕ, сирĕн Микулайпа.

П е т ĕ р. Микулайна?.. Йепле-ха?.. Килет-и вăл тата?.. Ах, тур-тур!..

В а ђ у к. Сирĕн Микулай килеймест. Ăна иртнĕ ернере пытартăмăр.

П е т ĕ р. Вилђĕ-и?..

В а ђ у к. Вилђĕ...

П е т ĕ р. Ех, ађам-ађам!... Ăҫта кайса вилтĕп?!.

В а ђ у к (хутаҫ парат). Акă, Микулай йапалисем пурте.

П е т ĕ р. Ађам-ађам!.. Ҫак йапалўсем ҫине пăхса тăмалла-им ĕнтĕ?.. (йĕрĕт).

Ех, мăн-тарăп вăрҫи! Пĕтерет ҫамрăк ҫынсене!.. Микулай-ађам!.. Йепле вăхăтсăр вилмелле пултăн?!..

(Ђаршав ўкет).